**Çĕр çинче асли çук çăкăртан**

*(Литература урокĕн тĕслĕхĕ)*

***С.А. АЛЕКСЕЕВА, Г.Л. НИКОЛАЕВА****, Çĕнĕ Шупашкарти 19-мĕш вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенсем*

**Шкул:** вырăс чĕлхиллĕ шкул. **Класс:** 5.

**Предмет:** тăван (чăваш) литератури.

**Тема (пай) ячĕ:** Çăкăртан хакли çук. (Ку блока вĕренме ĕç программинче 4 сехет уйăрнă).

**Урок теми:** Илпек Микулайĕ. «Çăкăр тĕпренчĕкĕ».

**Урок тĕсĕ:** темăна тата çĕнĕрен илнĕ пĕлĕве çирĕплетмелли урок.

**Харкамăн (пайăррăн) пĕлӳ илмелли тĕллевсем:**

1. Вĕренӳпе кăсăкланма хавхалантарни.

2. Вĕренӳре харпăр хăй тивĕçлĕхне туйма, хăй пултарулăхне шанма хăнăхтарни.

3. Çăкăра хаклама, çăкăр ӳстерекенсене хисеплеме вĕрентни.

**Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем (пур предметпа та вĕренме кирлисем):**

1. Йĕркелӳ: харпăр хăй тĕллĕн ĕçлес туртăма аталантарни.

2. Хутшăну: çыхăнуллă ăнланмалла каласа пама пултарни; мăшăрсенче, ушкăнсенче пĕр-пĕрне хисеплесе тата килĕштерсе ĕçлени.

3. Информаци: пĕр харăс темиçе информаци çăл куçĕпе (вĕренӳ кĕнекипе, текстпа, ӳкерчĕксемпе) ĕçлеме хăнăхтарни; кĕнекере кирлĕ текста, хăнăхтарусемпе ĕçсене, страницăра палăртнă сăмахсемпе йĕркесене хăвăрт тупма вĕрентни; вуланă текстпа ĕçлеме, унта кирлĕ информаци тупса тĕрлĕ тĕллевпе усă курма хистени; урокра туяннă пĕлӳпе, пурнăç опычĕпе усă курса панă ыйтусене хуравлама вĕрентни.

**Предметăн ятарлă пĕлӳ илмелли тĕллевсем:** каланине çирĕплетме е хирĕçлеме, хак пама вĕрентни; учителĕн пуплевне итлесе ăнланма хăнăхтарни; «Çăкăр тĕпренчĕкĕ» темăпа курăмлăх хатĕрĕсем, тĕрев сăмахĕсем, ыйтусем çине таянса çыхăнуллă каласа пама, презентацири информаци тăрăх тĕрĕс

предложенисем тума, вĕреннĕ сăмахсене (ытларах активлă словарьтисене) çыру тата калаçу пуплевĕнче курса е илтсе ăнланма, вĕсемпе вырăнлă усă курма хăнăхтарни, «Çăкăр çул çӳревĕ» видеосюжет пăхнă тăрăх хăйсен кăмăлне палăртма хавхалантарни.

**Технологисем:** сывлăха упрас технологи, критикăллă тĕпчев технологийĕ, ушкăнра хутшăнса ĕçлени, блок-модуллĕ технологи, информаципе коммуникаци технологийĕ.

**Мелпе меслетсем:** учитель сăмахĕ, учитель вулавĕ, вырăсла куçарни, ыйту-хурав, калаçу, видеосюжет пăхни, çĕнĕ пĕлĕве ăса хывни, кĕнекери текстпа ĕçлени, çĕнĕ сăмахсемпе ĕçлени, кану саманчĕ, шырав-тĕпчев, тишкерӳ-пĕтĕмлетӳ, суйлавлă вулав, слайдсемпе ĕçлени, схемăпа усă курса рефлекси ирттерни, клоуз тест, «Хĕвел» кластер йĕркелесе пĕтĕмлетӳ туни, культурăсен çыхăнăвĕ.

**Пуплев хăнăхăвĕсем:** сасăсене тĕрĕс илтни, сăмах йышне пуянлатни, çĕнĕ сăмахсемпе усă курса çыхăнуллă пуплеве аталантарни.

**Курăмлăх хатĕрĕсем:** вĕренӳ кĕнеки, POWER POINT программăпа хатĕрленĕ слайдсем, видеосюжет, валеçсе памалли материал.

**Кăтарту хатĕрĕсем:** компьютер, проектор, экран.

**Литература теорийĕ:** содержани, форма.

**Урок эпиграфĕ:**

Тус-тăванăм, çакна эс ан ман:
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Пуç тайса хисепле эс ăна,
Вăй та пурнăç парать вăл сана.

*В. Давыдов-Анатри.*

**У р о к  ю х ă м ĕ**

**I. Кăсăклантарса яни.**

***1. Класа йĕркелени, сывлăх сунни.***

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, халĕ пĕр-пĕрне ăшă кулă парнелĕпĕр те лайăх кăмăлпа урока пуçлăпăр. Сире пурне те ăнăçу сунатăп.

***2. Дежурнăй калаçни***: ачасене паянхи кунпа паллаштарни, эрнери кун ячĕсемпе ыйтусем пани.

***3. Кун хисепĕпе усă курса предложенисем йĕркелени.***

– Паян ака уйăхĕн миçемĕшĕ? (*Паян ака уйăхĕн 19-мĕшĕ.*)

– Сан юлташ миçемĕш шкулта вĕренет? (*Манăн юлташ 19-мĕш шкулта вĕренет.*)

***4. Пуплев зарядки.***

В ĕ р е н т е к е н. Халĕ хамăр чĕлхене вылятса илĕпĕр. Эпĕ урок эпиграфне мĕнле вуланине тимлĕ итлĕр, пусăмсене тĕрĕс лартса вулама хатĕрленĕр.

***5.Урок эпиграфĕпе ĕçлени:***

а) учитель вулани (сăвă авторĕ чăваш халăх поэчĕ В. Давыдов-Анатри пулнине палăртса хăварни);

ă) вырăсла куçарни;

б) учитель хыççăн ачасем вулани;

в) хорпа, икшер йĕрке, пĕчченшерĕн вулани.

***6. Видеосюжет пăхса вĕренӳ ĕçне пуçăнма хавхалантарни.***

В ĕ р е н т е к е н. Урок темине палăртма та вăхăт. Мĕне халаллăпăр-ши ăна паян? Унăн тупсăмне пĕлме пире видеосюжет пулăшĕ.

***7. Урок темине палăртни.***

В ĕ р е н т е к е н. Мĕн çинчен калаçăпăр-ши урокра? Кам мĕнле шухăшлать? (*Ачасен хуравĕсем.*) Çапла, паян сирĕнпе çĕр çинчи кашни çыншăн чи кирлĕ апат-çимĕç – çăкăр çинчен калаçăпăр. Паянхи урокăн теми: Илпек Микулайĕ çырнă «Çăкăр тĕпренчĕкĕ» калав.

***8. Пуплев хăнăхтарăвĕ.*** (*Проблемăна уçса памалли ыйтусене палăртни*).

В ĕ р е н т е к е н. Çăкăр… Унран хакли пур-ши тĕнчере? Çăкăрсăр эпир апат çиме лармастпăр. Унсăр эпир пĕр кун та пурăнаймастпăр. Анчах та вăл сĕтел çине килсе вырттăр тесен çав тери нумай ĕçлемелле, вăй хумалла. Çĕр ĕçченĕсем пирĕн сĕтел çинче яланах çăкăр пултăр тесен мĕнле ĕçсем туса ирттернине видеосюжет курса аса илтĕмĕр. Халĕ эсир çак видеосюжета мĕнле ăнланнине тĕрĕслĕпĕр.

Доска çинче – «Çăкăр çул çӳревĕ» темăпа çыхăннă сюжетлă ӳкерчĕксем. Кашни ача умĕнче – пĕр-пĕр ĕç çинчен пĕлтерекен предложени. Ачасем хăйсен предложенисене вуласа доска çинчи ӳкерчĕк айне çыпăçтарса хураççĕ.



Комбайнпа тырă вырни.

***9. Урок темипе паллаштарни, тĕллевсене лартни.***

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, халĕ пурнăçланă ĕçе тĕпе хурса паянхи урок темине татах та анлăлатăпăр: Илпек Микулайĕн пултарулăхĕпе кĕскен паллашăпăр, вăл çырнă «Çăкăр тĕпренчĕкĕ» текстпа ĕçлĕпĕр, клоуз-тест пурнăçлăпăр, «Хĕвел» кластер йĕркелĕпĕр, сăвăсем итлĕпĕр, юрă юрлăпăр.

**II. Ăнланса илни.**

***1. Çăкăр сăмах ытти чĕлхесенче мĕнле илтĕнни.***

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, çăкăр сăмаха ытти чĕлхесенче мĕнле калаççĕ-ши? Вуласа пĕлер-ха: *çörək* – азербайджанла, *икмәк* – тутарла тата пушкăртла, *екмек (ektek)* – туркменла тата турккăлла, *кши* – ирçелле*, киндым* – марилле.

***2. Учитель илемлĕ вулани.***

Тыт, тăванăм, асра:

Ан тĕпрет çăкăра.

Вăл пулсан – эс пуян,

Хăвна вăйлă туян…

Асли çук çăкăртан:

Хĕвелпе вăл пĕр тан.

Эс вĕçен вăл пуртан

Çăлтăр-уйăх таран.

Тыт, тăванăм, асра:

Ан тĕпрет çăкăра!

***3. «Çăкăр тĕпренчĕкĕ» калавпа ĕçлени.***

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, çăкăр туса илме çăмăл маррине эсир лайăх ăнланатăр. Çăкăра пирĕн хисеплемелле, упрамалла, ăна типтерлĕ тытмалла. Анчах та эпир хăш-пĕр чухне çакна асра тытманни те пулать. Кун пирки сирĕнпе «Çăкăр

тĕпренчĕкĕ» калавпа паллашса пĕлĕпĕр. Ăна проза ăсти, чăваш халăх писателĕ Илпек Микулайĕ çырнă.

а) Çĕнĕ сăмахсемпе паллашни: *пĕррехинче* – однажды, *тăп* – смирно, *тĕпрет* – накрошить, *тĕпренчĕк* – крошка, *тирпейлĕ* – аккуратно, *кăмăлсăррăн* – недовольно.

1) учитель – хор, хĕр ачасем, арçын ачасем;
2) мăшăрсенче;
3) сăнчăрпа пĕрер сăмах вулани.

ă) Кăтартуллă вулав.

В ĕ р е н т е к е н. Текста тимлĕ итлĕр, ăнланма тăрăшăр. Хăвăршăн мĕн çĕннине пĕлнине каласа пама хатĕрленĕр

б) Çĕнĕ сăмахсем пур предложенисене тупса вулани, вĕсене вырăсла куçарни.

в) Текста ăнланнине тĕрĕслени (1–2 ачаран кĕске содержанине вырăсла ыйтмалла).

г) Сăнчăр мелĕпе вулани.

д) Ыйтусем çине хуравлани**:**

– Ванюксен çемйинче миçе çын?
– Ванюк хăйне сĕтел хушшинче мĕнле тыткаланă?
– Вăл урайне мĕн ӳкернĕ?
– Ашшĕ Ванюк çине мĕншĕн кăмăлсăррăн пăхнă?
– Çăкăр çинчен ашшĕ Ванюка мĕн каланă? Тупса вулăр.
– Ванюк ашшĕ сăмахне ăнланнă-и? Çакă мĕнре курăнать?
– Сирĕн çемьере çăкăра тирпейлĕ тытаççĕ-и?
– Сире çак калав мĕнле пулма вĕрентет?

***4. Кану саманчĕ***. (*Тĕрлĕ хускану туни.*)

Вăштăр-вăштăр çил вĕрет,
Сарă пучах авăнать.
Çил арманĕ çаврăнать:
Тырăран çăнăх пулать.
Çил лăпланчĕ, чарăнăр,
Ларса шăплăха итлер.
Тăтăмăр, лăплантăмăр,
Вырăна вырнаçрăмăр.

***5. «Çăкăр тĕпренчĕкĕ» калав тăрăх клоуз-тест çырни.***

(1) Пирĕн çемье пысăк:асаттепе асанне, аттепе анне, пичче,_______________.

(2) Ванюк шăллăм çеç _______________ ларма пĕлмест.

(3)Вăл стаканри сĕте тăкнă,_____________________тĕпретнĕ.

(4) Атте Ванюк çине ______________пăхрĕ.

(5) Çăкăр______________ пулать.

(6) Вăл______________ сĕтел çинчи тĕпренчĕксене пуçтарчĕ.

Суйласа илмелли вариантсем:

(1) а) Анюк йăмăк, ă) Ванюк шăллăм, б) Санюк пичче;

(2) а) тăп, ă) шăп, б) хусканусăр;

(3) а) кулача, ă) çăкăра, б) кукăле;

(4) а) савăнса, ă) тĕлĕнсе, б) кăмăлсăррăн;

(5) а) çулçăран, ă) пĕрчĕрен, б) чечекрен;

(6) а) кăмăлсăррăн, ă) савăнса, б) васкасах.

***6.Текст содержанине схема тĕревĕпе тĕрĕслени.***



***7. Содержанине кĕскен каласа пани.***

***8. «Ваттисен сăмахĕсем» вăййă.*** (*Ушкăнсенче ĕçлени.*)

В ĕ р е н т е к е н. Çăкăр вăл – сывлăх, тулăх пурнăç, çĕкленӳллĕ кăмăл. Ахальтен мар чăваш халăхĕ çăкăр çинчен нумай сăвă-юрă хывнă, ваттисем çăкăр çинчен ăса вĕрентекен ырă шухăш каланă. Ăслă каларăшсене пирĕн яланах асра тытмалла. Ачасем, эсир çăкăр çинчен мĕнле ваттисен сăмахĕсем пĕлетĕр? (*Ачасен хуравĕсем*). Халĕ эпир ушкăнсене пайланса «Ваттисен сăмахĕсем» вăййă выльăпăр. Сирĕн конвертри сăмахсенчен ваттисен сăмахĕсем йĕркелемелле.

| | |
|---|---|
| Çăкăр | çăкăр лартма хушнă. |
| Çăкăр-тăвартан | çăкăр та кулачă пек. |
| Çăкăр тутине | аслă пулаймăн. |
| Çăкăртан | ĕçлекен пĕлет. |

Çăкăр ĕç ăнать.

Килекен çынна пĕрчĕрен пулать.

Çăкăр пулсан хырăм хыççăн çӳремест.

Ĕçчен çыншăн тĕрек.

Çăкăр вăл асли çук.

**III. Рефлекси.**

***1. Учитель сăмахĕ.***

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, урок пуçламăшĕнче палăртнă эпиграфа тепĕр хут аса илĕпĕр.

Тус-тăванăм, çакна эс ан ман:
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Пуç тайса хисепле эс ăна,
Вăй та пурнăç парать вăл сана.

Пурнăçра хаклăран та хаклă, кирлĕрен те кирлĕ пуянлăх – çăкăр. Çăкăр! Вăл ĕмĕртенпех çав тери пысăк чысра-хисепре пулнă. Пурте ун умĕнче пуç тайса «Çăкăртан асли çук!», – тенĕ. Çăкăра хисеплесси, перекетлесси – кашни ырă шухăш-кăмăлпа пурăнакан çыннăн таса тивĕçĕ.

***2. «Хĕвел» кластер туни.***

***3.Рефлекси карточкине тултарни.***

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, эпир паянхи урокра тĕрлĕ ĕç турăмăр. Халĕ сире хăвăр шухăш-кăмăлăра палăртма рефлекси таблицине тултарма сĕнетĕп.

| № | Урокри ĕçе тĕрлĕ енчен тишкерни | Ĕçе хаклани |
|---|---|---|
| 1. | Урок материалĕ ... пулчĕ. | çăмăл / йывăр |
| 2. | Урок материалне эпĕ ... . | • пĕтĕмпех ăнлантăм, ыттисене пулăшма хатĕр<br>• пĕтĕмпех ăнлантăм<br>• кăштах ăнлантăм<br>• ăнланмарăм |
| 3. | Урок мана ... . | килĕшрĕ / килĕшмерĕ |
| 4. | Мана ... тĕлĕнтерчĕ. | • çăкăр сăмах ытти чĕлхесенче тĕрлĕрен илтĕнни |

| | | |
|---|---|---|
| | | • çăкăр çул çӳревĕ |
| 5. | Халĕ эпĕ ... пĕлетĕп. | • çăкăр çул-йĕрне<br>• çăкăрпа çыхăннă ваттисен сăмахĕсем<br>• çăкăрпа мĕнле пулмаллине |
| 6. | Урокри хамăн ĕçпе эпĕ ... . | кăмăллă / кăмăлсăр |

***4. Киле ĕç (суйлавлă).***

«Çăкăр çул çӳревĕ» темăпа сюжетлă ӳкерчĕк хатĕрлемелле е «Çăкăр тĕпренчĕкĕ» калавăн содержанине каласа пама хăнăхмалла.

***5. Урока юрăпа вĕçлени.***

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, паянхи урока Петĕр Эйзин сăввипе Анатолий Никитин кĕвĕленĕ «Асли çук çăкăртан» юрра пурте пĕрле юрласа вĕçлĕпĕр.